## Çурçĕр енчен, çилленсе...(сăвă)

Çурçĕр енчен, çилленсе,
Хăвасене силлесе,
Мăрьесенче уласа,
Арçури пек ахăрса,
Вĕрет вăйлă тухатмăш,
Салху тăсать: ăш-ăш-ăш.
Е çил-тăвăл тапратать,
Урам тăрăх кустарать.

Çын курайми аллипе
Татать хăва çулçине,
Мукалайми çавипе
Çулать тĕнче илемне.
Хура вăрман хумханса,
Çĕре çити тайăлать,
Куççулĕпе макăрса
Хăй çулçипе уйрăлать.

Вĕçен кайăк васкаса,
Хăй йăвине пăрахать.
Кичем-кичем кăшкăрса,
Сĕм вăрмана хăварать.
Картан-картан пухăнса,
Вĕçет кăнтăр еннелле.
Хăй йăвине асăнса
Тăкать вĕри куссульне...

Хура вăрман, сĕм вăрман,
Çта илемӳ кайрĕ сан?
Кам çурчĕ сан чĕрӳне,
Кам татрĕ сан ĕмĕте?
Хура вăрман, хумханса,
Ларать йĕрсе, ахлатса.

Пĕр тухатмăш савăнса
Ĕçлет ĕçне, ахăрса.

Шăнкăр-шăнкăр юхан шыв,
Мĕншĕн эсĕ пăтранан?
Мĕншĕн тарăн çырмара
Тăмлă хăйăр тапратан?
Мĕншĕн санăн тĕпӳнте
Çутă пулă курăнмасть?
Мĕншĕн вĕт-шак кĕтӳпе
Шыв хĕррине пухăнмасть?

Çта илемлĕ çырансем?
Ăçта кайнă чарлансем?
Мĕншĕн шаннă чечексем?
Çта çухалнă çĕленсем?
Мĕншĕн хăмăш хумханать,
Çапкаланать, хусăлать?

— Эх, ан ыйтсам эс манран,
Тарап эпĕ хам хамран;
Иртрĕ манăн çутă кун,
Сыв пул, йĕкĕт, сывă пул.

Çутă тĕнче хурланса
Хăй çуттине çухатнă.
Çутă хĕвел вăтанса
Пĕлĕт хыçне пытаннă.
Кăн-кăвакчĕ вĕт пĕлĕт —
Халĕ кайнă хуралса...
Те чăнах ку, те тĕлĕк, —
Вăл та Йĕрет хурланса.

*Тал-Мăрса, Г. Салху çурçĕртен...: [сăвă] / Г. Тал-Мăрса // Тал-Мăрса Г. Хĕрлĕ çар çыннин юрри: сăвăсем, калавсем, пьесăсем / Г. Тал-Мăрса; [В. Ахун, В. Станъял пухса хатĕрл.]. - Шупашкар,1975. – С.38-39.*